❑Е.В. ФЕДОТОВА






# ЧĂВАШСЕН ТУПМАЛЛИ ЮМАХĔСЕНЧЕ АВАЛХИ МИФСЕМ ПАЛĂРСА ЮЛНИ

**Аннотация:** Авалхи чăвашсем космогони, антропологи, зоологи енĕпе мĕнле шухăшланин палăрăмĕсем фольклорăн тĕрлĕ жанрĕсенче упранса юлнă. Статьяра тупмалли юмахсенчи мифологи палăрăмĕсене тĕпченĕ. Авалхи мифсен рудименчĕсем ытларах космогонипе çыхăннă тупмалли юмахсенче палăраççĕ. Мифологирен тупмалли юмахсен жанрне, тĕпрен илсен, илемлĕ, паха сăнарсем тата уйрăм сюжетсем куçнă. Каярах чăвашсен авалхи мифла тĕнчекурăмĕ сайра хутра христианство витĕмĕпе хутăшнă тĕслĕхсем те тĕл пулаççĕ. Хăйсен тĕп тĕллевне пула тупмалли юмахсем авалхи саманасенчех пулса кайнă реликтсене, мифологи пайрăмĕсене паянхи куна илсе çитернĕ. Тупмалли юмахсенче халăхăн ĕмĕрсем хушши пуçтарăнса пынă ăс-хакăлĕ палăрать.

**Тĕп сăмахсем:** чăваш халăх сăмахлăхĕ, тупмалли юмахсем, мифсен палăрăмĕсем.

### Çuvaş Bilmecelerinde Eski Mitlerin İzleri

**Özet:** Eski Çuvaşların kozmogoni, antropoloji, zooloji hakkında nasıl düşündükleri gösteren izler, folklorun çeşitli türlerinde korunmuştur. Bu makalede bilmecelerdeki mitolojik bulgular araştırılmıştır. Eski mitlerin özellikleri daha çok kozmogoni ile bağlantılı olan bilmecelerde görülür. Mitolojiden bilmece türüne, esasen, güzel ve önemli tipler ile özel konular geçmiştir. Geçmişte Çuvaşların eski mitlere özgü dünya algısı, bazen Hristiyanlık etkisi ile karışmış örneklerde tanıklanmaktadır. Kendi temel amacı doğrultusunda bilmeceler, eski zamanlara ait arkaik unsurları, mitoloji ögelerini bugüne taşımıştır. Bilmecelerde halkın yüzyıllar içinde vücuda gelen bilinci yankılanmaktadır.

**Anahtar Kelimeler:** Çuvaş halk edebiyatı, bilmeceler, mitlerin izleri

### Traces of Ancient Myths in Riddles of Chuvash

**Abstract:** The traces that demonstrate how Ancient Chuvash people think about cosmogony, anthropology and zoology are preserved in various types of folklore. In this article, the mythological findings in riddles are explored. The features of old myths are mostly seen in riddles related to

cosmogony. Essentially, beautiful and valuable types and specal subjects are transferred from mythology to riddle genre. Chuvash people's old mythical perception of the world that was seen in the past is witnessed rarely in written documents, within examples molded with the influence of Christianity. Riddles, in accordance with their basic purpose, transfer archaic elements of ancient times and mythological items to present times. The consciousness of the nation that is built up in centuries echoes in riddles.

**Key Words:** Chuvash Folk Literature, Riddles, Traces of Myths

Кашни истори тапхӑрӗ хӑй вӑхӑтне ӳкерсе кӑтартнӑ хайлавсем ҫуратать. Авалхи чӑвашсем космогони, антропологи, зоологи енӗпе мӗнле шухӑшланин палӑрӑмӗсем фольклорӑн тӗрлӗ жанрӗсенче упранса юлнӑ. Вӗсем халӑх пултарулӑхӗн тексчӗсенче уйрӑм сюжет, мотив е сӑнар пек ӳкерӗнсе юлнӑ.

Халӑх-художник (халӑх-ӳкерӳҫӗ) хӑй таврари пулӑмсене хӑйне майлӑ ӳкерсе кӑтартать. Пӗлмен, ӑнланман пулӑмсене вӑл хӑйне майлӑ ӑнлантарма тӑрӑшнӑ, мифла сӑнарсем, каярах хӑйсене хӳтӗлеме е пӗр-пӗр айӑпа кӗрсен айӑплама, асап хума пур пек турӑсен пантеонне шухӑшласа кӑларнӑ. Сӑмах вӑйне ӗненни йӑла-йӗрке поэзине –*пил сӑмахӗсем, ылхансем, вӗрӳ-суру чӗлхисем* –пуҫласа янӑ. Ҫак сӑмахсене каланӑ чух хӑйӗн вӑхӑчӗ, вырӑнӗ пулнӑ –культла ритуалсене ҫирӗп пӑхӑнмалла пулнӑ.

Тупмалли юмах –авалах пулса кайнӑ жанр. Кун пирки Ф.И. Буслаев, О.Ф. Миллер, И.А. Худяков тата ытти тӗпчевҫӗсем ҫирӗплетсех калаҫҫӗ. Юмахсене тата тупмалли юмахсене мифсемпе ҫыхӑнтарса ӑнлантаракан чи пӗрремӗш тӗпчевҫӗсем А.Н. Афанасьев тата И.А. Худяков пулнӑ. Чӑваш тӗпчевҫисенчен тупмалли юмахсене Н.Р. Романов, В.Г. Родионов, Е.С. Сидорова, Н.И. Егоров тата ыттисем тӗпченӗ. Анчах та тупмалли юмахсенчи мифологи палӑрӑмӗсене тӗпченӗ ӗҫсем сахалтарах (Федотова 2016: 256–262). Вӑл енӗпе ку пирӗн пуҫламӑш ӗҫсенчен пӗри теме те пулать. Малалла анлӑ ӗҫсем пуласса шанас килет.

Авалхи ҫын ҫут ҫанталӑк пулӑмӗсене ӑнланса ҫитерейменнипе вӗсене мӗнле те пулин ӑнлантарса парасшӑн пулнӑ. Этем тупмалли юмахсен илемлӗ сӑнарӗсенче ҫав ӑнланман япаласене, пулӑмсене ӑнлантарса пама, куҫ умне кӑларса тӑратма тӑрӑшнӑ. Ҫавӑнпа ҫут ҫанталӑк ҫинчен калакан тупмалли юмахсем вӗсем – авалхи ҫынсен тӗнче курӑмне кӑтартакан мифсен кӗске формисем пулса тӑраҫҫӗ. Тӗслӗхрен, *«Асатте урхамахӗ ҫӗр кисретсе кӗҫенет»* (Чӑваш халӑх пултарулӑхӗ. Тупмалли юмахсем 2015: 36)*, «Пӳрт тӑрринче папай кӗрлет»* [474 №], *«Ҫулла асатте мӗкӗрет-вӑрҫать, хӗлле ҫывӑрать»* [481 №], *«Ҫӳл тӳпере ҫӳрен ут кӗҫенет»* [483 №]. Ӗлӗкхи этемсен шухӑшӗпе: «Аслати хӑйӗн капӑр урапипе, вичкӗн учӗсемпе пӗлӗт тӑрӑх кӗмсӗртеттерсе ҫӳрет, уй-хирсене ҫумӑр парать, Шуйттана хӑвалать. Ӑна тивертме Аслати туррӑн Ҫиҫӗм те, Аҫа чул та пур. Вӑл вӗсене вирхӗнтерсе ярсан Тӗнче кисренет, Ҫӗр ҫурӑлать» (Чӑваш халӑх пултарулахӗ. Мифсем… 2005: 79). *Аслати* –Аслӑ Турӑ. «Вӑл ырӑ та, хаяр та. Ҫӳлти тӗнчери турӑсенчен ӑна ытларах пӗлеҫҫӗ, мӗншӗн тесен ӑна асӑрхамасӑр юлма ҫук: вӑл кашни ҫуллах кӗрлет. Ялти ҫын ӑна паянхи кун та «аслӑ атте», «аслӑ ати» е «тур мучи» тет. Ҫак шухӑш йӗрӗ аслатипе ҫиҫӗм ҫинчен калакан тупмалли юмахсенче упранса юлнӑ, вӗсем шӑпах ҫав кӗске мифсем пулса тӑраҫҫӗ.

Аслатипе çиçĕм çинчен калакан тупмалли юмахсенче *Тĕнче варри* те палăрать: *«Çеçен хир варринче ылтăн туя выртать» (Çиçĕм), «Çеçен хир варринче ылтăн юпа» (Çиçĕм)* [476, 477 №№]. *«Уй варринче ват юман, ват юманăн тăват турат, тăват туратра вун икĕ йăва, кашни йăвара тăватшар кăсăя, кашни кăсăйин çичшер чĕпĕ» (Çулталăк: уйăх, эрне, кунпа çĕр)* [4664 №]. *«Çĕр варринче пĕр йывăç, йывăççин вун икĕ турат, туратсерен вăтăр çулçă» (Çулталăк: уйăх, кунсем)* [4657 №]. *Тĕнче варрине* тупмалли юмахсенче çеçен хир варри, хир, уй варри пек кăтартнă. Тĕнче варри чĕлхе, вĕрӳ-суру сăмахĕсенче тĕнче модельне çӳлтен аялалла каласа кăтартнă чух тĕл пулать: *«Ылтăн йĕтем, ылтăн йĕтем çинче ылтăн юпа, ылтăн юпа çинче ылтăн йăва, ылтăн йăва çинче ылтăн çăмарта»* (Чăваш халăх пултарулăхĕ. Чĕлхе сăмахĕсем… 2014: 269).

Çăлтăр çинчен калакан тупмалли юмахсенче çăлтăра çӳллĕ ту тăрринчи тимĕр юпа пек кăтартнă. Çӳллĕ ту −Ама ту сăнарĕ: *«Çӳлĕ тăвăн тăрринче Тимĕр юпа ялтăртатса ларать» (Çăлтăр)* [4005 №]. Çĕр çинче пурăнакан çыншăн пуç тăрринчи тӳпе −питĕ çӳллĕ, çӳллĕ ту тăрри пек туйăнать. Пĕлĕт хĕррисем тĕнче хĕрринелле аялалла аннă пек туйăнаççĕ. Вара пĕлĕт, тӳпе çыннăн куçĕ умĕнче ту пек туйăнать. Çын хăйне хăвăл ту ăшĕнче тăнă пек туять, тăва шал енчен курса тăнă пек. Çавăнпа, пирĕн шутпа, текстсенче пĕлĕте, тӳпене ту тенĕ. Каласа кăтартакан тупмалли юмахсем хăйсем чĕлхе, вĕрӳ-суру сăмахĕсен тĕслĕхĕсем пек пулса тăраççĕ, тĕнче модельне ӳкерсе параççĕ: *«Çеçен хир варринче çавра кӳлĕ, çавра кӳлĕ варринче ылтăн юман, ылтăн юман тăрринче ылтăн йăва, ылтăн йăвара ылтăн ăмăрт кайăк, ăмăрткайăкăн айĕнче вун икĕ çăмарта, вун икĕ çăмартаран аллă икĕ чĕпĕ тухнă, аллă икĕ чĕпĕ пĕр çулта виççĕр утмăл ултă çăмарта тунă» (Çулталăк: уйăх, эрне, кун)* [4656 №].

Чăвашсен Уйăх çинчи мĕлкĕ çинчен калакан миф анлă сарăлнă: тăлăх хĕр Уйăхран пулăшу ыйтнă та Уйăх ăна хăй патне анса илнĕ. Çавăнтанпа тăлăх хĕр Уйăх çинче тăрать. Асăннă сюжет Уйăх çинчен калакан тупмалли юмахсенче те аван ӳкерĕнсе юлнă: *«Аслă улăхра Уйпике çӳрет»* [5539 №], *«Пушă хирте хĕрлĕ хĕр çӳрет»* [5587 №]», *«Çеçенхирте хĕрлĕ хĕр çӳрет»* [5599 №]. Уйăх çинчи хĕр çинчен калакан миф тĕслĕхне илсе кăтартатпăр:

«Амаçури тăван мар хĕрне питĕ курайман тет. Хĕре тем тĕрлĕ асап кăтартса вĕлересшĕн пулнă тет хайхи.

Пĕрре, усалсем тытчăр тесе, хĕре çур çĕр тĕлĕнче шыв ăсма кăларса янă тет. Çăлĕ инçе, Шуйттан варĕ тĕпĕнче пулнă, тет. Хăранипе хĕр чунтан макăрса çăлкуçĕ патне çитнĕ. Çав самантра пĕлĕт айĕнчен уйăх курăнса кайнă тет.

– Уйăх-аннем, капла тĕттĕмре амаçуринчен нуша куриччен, сан пата çутта пырса уйăх чури пуласчĕ, — тесе йăлăнса макăрнă тет.

Уйăх хĕре кĕвенти-качкипех хăй патне туртса илнĕ тет» (Чăваш халăх сăмахлăхĕ... 1987: 43–44).

Аслатипе çиçĕм çинчен калакан хăш пĕр тупмалли юмахсенче *Вĕре çĕлен* сăнарĕ тĕл пулать: *«Çĕрпе пĕлĕт хушшинче вутлă çĕлен вăй вылять» (Аслатипе çиçĕм)* [479 №]. Чăвашсем хушшинче вут тăкса пĕлĕтре вĕççе пыракан Вĕре çĕлен çинчен халапланисем анлă сарăлнă: *«Чăвашсем Вĕреçĕлен пур теççĕ. Вăл, вĕçен кайăк пек, çĕрле вĕççе вут тăкса çӳренĕ теççĕ», «Вĕреçĕлен ахаль çĕлен манирлех пулать, кирлĕ чухне вăл çунатлă пулать, вĕççе те çӳрет тет. Вĕççе çӳренĕ чухне çĕрле вут хĕлхемсем кăларса çӳрет теççĕ; çавăнтан ăна Вĕреçĕлен иккенне пĕлеççĕ»* (Чăваш халăх пултарулăхĕ. Мифсем… 2004: 318). Вĕре çĕлен вăл чăвашсен

мифологилле ăнланăвĕнче – усал. Халăхра каланă тăрăх, Вĕре çĕлен вăл тĕттĕм пулсан вут тăкса вĕçсе килет. Сĕре хуйхăрса пурăнакан çын патне килет тет вăл. Вĕре çĕлен вăл хĕрарăм патне арçын пулса килет, арçын патне – хĕрарăм пулса килет тет. Кайран çав хуйхăракан çын Вĕре çĕлен килнипе чирлесе вилет тет (Матвеев 2001: 104).

Çумăр çинчен калакан тупмалли юмахсенче инçетрен килекен *Ашапатман карчăкĕ* тĕл пулать: *«Ашапатман вĕçсе килет, акшар чулĕ тăкса килет» (Çумăр)* [4722 №]. Ăрăмçăсем, юмăçсем калакан сăмахĕсенче тĕл пулакан çын сăн-сăпатлă мифла тĕп сăнар: усса янă вăрăм çӳçлĕ, кĕмĕл пек шурă çӳçлĕ, пĕр куçлă, ылттăн пĕр шăллă, <…> пĕр тĕклĕ ватă карчăк; вăл инçетрен: тинĕссем, вăрмансем, тусем урлă килет. Ырă тума ăна Вут Ама, Шыв Амăшĕ тата ыт. те пулăшаççĕ (Трофимов 2001: 77). Тупмалли юмахсен тексчĕсене тишкернĕ май тата çакă курăнать: чăвашсем шухăшланă тăрăх, çумăр тата çумăр пĕрчисем хăйне уйрăм савăтра упранаççĕ – çӳпçере е пичкере: *«Мăн асаттен шыв çӳпçи тӳнсе кайнă. (Çумăр). Çумăрăн савăчĕ пур»* [4729 №]. Çакă аслатипе çиçĕм, çумăр çинчен калакан мифсенче курăнать: *«Чи малтан Аслати те, Çиçĕм те пулман тет. Çынсем иртĕхсе каясран Турă вĕсене мĕнпе те пулин хăратасшăн пулнă тет. Вара вăл Илья пророка тимĕр урапапа вут вĕçлĕ пушă панă тет. Илья пророк шыв патне кайнă чух тимĕр урапи питĕ хытă шалтăртатнă тет. Каялла килнĕ чух пичкинчен шывĕ тăкăннă тет. Лаши хăвăрт утайман пирки Илья пророк ăна вут вĕçлĕ пушшипе хăваланă тет. Çаксене çĕр çинче аслати авăтать, çиçĕм çиçет, çумăр çăвать теççĕ»* (Чăваш халăх пултарулăхĕ. Мифсем… 2004: 82). Ку текстра эпир православи тĕнĕнчи Илья-пророк сăнарне куратпăр. Византирен Раççее килсе вырăс культури урлă Илья-пророк кульчĕ чăвашсен авалхи ĕненĕвĕпе çыхăннă. Халăх ĕненнĕ тăрăх, Илья-пророк вутлă лашасем кӳлнĕ урапапа пĕлĕт тăрăх кĕмсĕртеттерсе çӳренипе аслатипе çиçĕм пулать (Илья-пророк).

Чăвашсемшĕн Асамат кĕперĕ — Турă хĕрĕн пиçиххийĕ. Çакă авалтан килекен мифра аван упранса юлнă: «Асамат кĕперĕ карăнсан: «Туррăн хĕрĕ пилĕкне салтнă», — теççĕ. Пиçиххийĕ çавăн пек симĕсĕн-кăвакăн курăнать тет. Турăсене те, çынсене те, çапла илемлĕн курăнса, хăй патне астарса илĕртсе тăрать тет. Анчах яхăнне ямасть тет, кам та пулин птнерех пырсанах, пиçиххине пытарса хурать тет.

Туррăн хĕрĕ çав пиçиххине çăварнирен пуçласа мункунччен тĕртсе кăларать тет» (Чăваш халăх сăмахлăхĕ... 1987: 50–51). Çак мифри Турă хĕрĕн пиçиххийĕ тупмалли юмахсенче лайăх курăнать. Унта Асамат кĕперне ытарлăн пиçихха тенĕ. Акă тĕслĕхрен: «Аллă–кĕллĕ пиççихине Атăл урлă ывăтрăм» [388 №], «Пурçăн пиçихха уй урлă» [410 №], «Пӳрт тăрринче пурçăн пиçихха» [412 №].

Уйăх çинчен калакан тупмалли юмахсенче ĕлĕк-авал пĕлĕт аялта пулни, çынсем ăна çӳлĕк вырăнне усă курни – çăкăр пĕçерсе кăларсан сивĕнме пĕлĕт çине хуни – палăрать: *«Лаç тăрринче пĕр чăкăт» (Уйăх)* [5572 №], *«Пăлтăр тăрринче çур çăкăр выртать» (Уйăх)* [5577 №], *«Пӳрт çинче çăкăр выртать» (Уйăх)* [5591 №], «Пӳрт тăрринче çур пашалу выртать» (Уйăх) [5592 №], *«Пӳрт тӳпинче пĕтĕм çăкăр выртать» (Уйăх)* [5595 №], *«Ял çинче çур чăкăт çакăнса тăрать» (Уйăх)* [5624 №]. Чăвашсен хушшинче пĕлĕт малтан аял пулни çинчен калакан мифсем анлă сарăлнă. Акă, тĕслĕхрен: *«Пĕлĕт тахçан ĕлĕк ку чухнехи пек питĕ çӳлте пулман тет, пӳрт-çурт, карта-хуралтă çийĕсене сĕртĕнсе иртсе çӳренĕ тет»* [56 №], *«Ĕлĕк пĕлĕт вăрăм çын пуçне перĕннĕ. Хăш-пĕр çынсемшĕн пĕлĕт çӳлĕк пек пулнă. Çынсем час-часах хăйсен япалисене пĕлĕт çине хăпартса хунă»* [57 №], *«Чăваш хĕрарăмĕсем çăкăр пĕçернĕ те сивĕтме пĕлĕтсем çине хунă.*

*Кайран ҫăкăра илме тесе ун ҫине таса мар пусма хунă. Пĕлĕтсем вара таса мара юратман, вĕсем тӳрех ҫӳлелле ухса* (улăхса – *Е.Ф.*) *кайнă»* [62 №]. Хăйсен тĕп тĕллевне кура, тупмалли юмахсем пирĕн пата авалхи реликтсене, авалтан килекен космогонилле мифсен пайрăмĕсене илсе ҫитернĕ. Авалхи мифла сăнарсемпе е сюжетсемпе ҫыхăннă тупмалли юмахсем мифсене тĕплĕн пĕлме хистеҫҫĕ, унсăрăн вĕсене ăнланма май ҫук.

Уйăхпа ҫăлтăрсем ҫинчен калакан тупмалли юмахсенче халăх авалах кĕтӳ кĕтсе пурăннине курма пулать: *«Пĕр кĕтӳҫ пин сурăх пăхать»* [5582 №], *«Кĕленче ту ҫинче пин сурăх кĕтсе пинпӳ старик ларать»* [5630 №], *«Пĕр кĕтĕвĕҫ сурăх кĕтет. Сурăхĕсем ҫунатлă, кĕтĕвĕҫĕ мыракаллă»* [5650 №], *«Таса уйра пĕр кĕтӳҫĕ сурăх кĕтет: сурăхĕсем ҫунатлă, кĕтӳҫĕ мăйракаллă»* [5652 №]. Ку тĕслĕхсем Д.Н. Садовников шухăшне лайăх ҫирĕплетеҫҫĕ: «Уйăх, ҫăлтăрсем, аслатипе ҫиҫĕм ҫинчен калакан чи авалхи тупмалли юмахсем авалхи ҫынсен пурнăҫне – ухатана ҫӳренине, кĕтӳ кĕтсе пурăннине яр уҫҫăн кăтартаҫҫĕ. Авалхи этем пурлăх, мул, тупра мĕн иккенне пĕлмен вăхăта, унăн пурнăҫĕ выльăх кĕтсе пурăнакан вырăнти ҫутҫанталăкран килнине сăнлаҫҫĕ» (Садовников 1876: 333).

Ыраш «пурнăҫĕ» ҫинчен калакан тупмалли юмахсенче, тĕслĕхрен, чăваш пурнăҫĕнчи чи пĕлтерĕшлĕ ӳсен-тăран пурнăҫĕн кашни тапхăрĕ ҫинчен тĕплĕн каласа кăтартнă. Ыраш ҫинчен калакан тупмалли юмаха илсе кăтартатпăр: *«Ик эрнерен ҫуралать, сакăр эрне сăпкара выртать, ҫирĕм пилĕк эрне кипке ăшĕнче сывăрать, тăватă эрне ӳсет, икĕ эрне савăнать, икĕ эрне самăрлать, икĕ эрне саралать, ҫулталăкра ҫаврăнать»* (Ваттисен сăмахĕсем… 1960: 256). Илсе кăтартнă чăвашсен ыраш, ыраш пĕрчи ҫинчен калакан тупмалли юмахĕнче эпир авалхи тухăҫ мифологийĕн ахрăмне (палăрăмне) – тулă (ыраш) кульчĕпе ҫыхăннă, вилекен, кайран каллех чĕрĕлекен туррине – куратпăр (Фрезер 1928: 228; Арутюнян 1969).

Тĕрлĕ халăхсен хушшинче ҫӳрекен, грексен мифологи сюжечĕпе пулса кайнă теекен тупмалли юмах чăвашсен халăх сăмахлăхĕнче те пур. Ăна венгр тĕпчевҫи Дюла Месарош 1907–1908 ҫулсенче чăваш ялĕсенче халăх сăмахлăхне пухнă чухне тури чăвашсем патĕнче ҫырса илнĕ. Акă вăл текст: «Ирпе тăватă орапа, кăнтăрла ик орапа, каҫпа виҫ орапа» – Этем утни» (Месарош 1912: 34). Грексен мифологи сюжечĕ: Сфинксăн тупмалли юмахĕн тупсăмне тупнă Эдип Фивы хулине ирĕке кăларнă. Сфинксăн тупмалли юмахĕ ҫакăн пек пулнă: «Кам ирхине тăватă уран, кăнтăрла икĕ уран, каҫхине виҫĕ уран ҫӳрет? Ҫĕр ҫинче пурăнакан нимле чĕрĕ чун та ун пек улшăнмасть. Тăватă уран ҫӳренĕ чух унăн вăйĕ сахалтарах, ытти чухнехинчен хуллентерех утать. (Ҫын)». Дюла Месарош ҫырса илнĕ тупмалли юмах чăвашăн хăйĕнех тесе иккĕленмесĕрех калама пулать. Мĕншĕн тесен чăваш та, ытти халăх пекех, ҫын пурнăҫне – ҫуралсанах пуҫласа мĕн виличченех – сăнанă.

Чăваш халăхĕн ҫичĕ пин те тăватҫĕре яхăн тупмалли юмахран эпир авалхи мифла шухăшлавпа ҫыхăннă тăватă теҫеткене яхăн (вариантсемпе) текст тупрăмăр. Суйласа илнĕ материала тишкернĕ май эпир ҫакăн пек пĕтĕмлетӳсем тума пултаратпăр:

– Авалхи мифсен пайрăмĕсем ытларах космогонипе ҫыхăннă тупмалли юмахсенче упранса юлнă.

– Мифологирен тупмалли юмахсен жанрне, тĕпрен илсен, илемлĕ, паха сăнарсем тата уйрăм сюжетсем куҫнă.

– Каярах чăвашсен авалхи мифла тĕнчекурăмĕ сайра хутра христианство витĕмĕпе хутăшнă тĕслĕхсем те тĕл пулаҫҫĕ.

– Хайсен тĕп тĕллевне пула тупмалли юмахсем авалхи саманасенчех пулса кайнă реликтсене, мифологи пайрăмĕсене паянхи куна илсе çитернĕ.

– Тупмалли юмахсенче халăхăн ĕмĕрсем хушши пуçтарăнса пынă ăс-хакăлĕ палăрать.

**Литература**

Арутюнян, С.Б. (1969). "Отражение древневосточной жатвенной мифологии в загадке о пшенице". http://lraber.asj-oa.am/1556/1/67.pdf Дата обращения: 18.09.2015.

Матвеев, Г.Б. (2001). "Вĕре çĕлен". *Краткая чувашская энциклопедия*. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2001. – С. 104.

Месарош, Дюла (1912). Соб*рание чувашского устно-поэтического творчества: пословицы, загадки, песни, сказки. Т. 2*. Будапешт, 1912. 540 с.

Садовников, Д.Н. (1876). *Загадки русского народа*. СПб.: Типография Н.А. Лебедева, 1876. 333 с.

Трофимов, А.А. (2001). "Ашапатман". *Краткая чувашская энциклопедия*. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2001. С. 77.

Федотова, Е.В. (2016). "Рудименты мифологических представлений в чувашских загадках". *Мифология чувашей: истоки, эволюция и культурные взаимосвязи: Материалы Межрегиональной научно-практической конференции* (Чебоксары, 8 октября 2015 г.) / сост. и отв. ред. А.П. Леонтьев; ЧГИГН. – Чебоксары, 2016. – С. 256–262.

Фрезер, Дж. (1928). Золотая ветвь. Вып. III. Умирающие и воскресающие боги растительности. М., 1928.

*Чăваш халăх пултарулăхĕ. Мифсем…* (2005). – *Чăваш халăх пултарулăхĕ. Мифсем, легендăсем, халапсем* / Йĕркелекенĕ тата ăслăлăх редакторĕ *В.П. Станьял*. Ум сăмахне çыраканĕсем *А.А. Трофимов, В.П. Станьял*. Пухса хатĕрлекенĕ *Е.С. Сидорова*. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2004. – 567 с.

*Чăваш халăх пултарулăхĕ. Тупмалли юмахсем* (2015). – *Чăваш халăх пултарулăхĕ. Тупмалли юмахсем. Пĕрремĕш кĕнеке* / ăслăлăх редакторĕ, пухса хатĕрлекенĕ, ум сăмахпа ăнлантарусене çыраканĕ *Е.В. Федотова*. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2015. – (Кĕнекере пурĕ 446 с.) С. 39. 455 №. Малалла çак кĕнекери текстсен номерне кăтартатпăр. Пĕрремĕш кĕнекене 1–3838 №№ кĕнĕ. 3839–7381 №№ иккĕмĕш кĕнекере тухнă: Чăваш халăх пултарулăхĕ. Тупмалли юмахсем. Иккĕмĕш кĕнеке / пухса хатĕрлекенĕ, ум сăмахпа ăнлантарусене çыраканĕ *Е.В. Федотова*. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2016. – 398 с.

*Чăваш халăх пултарулăхĕ. Чĕлхе сăмахĕсем…* (2014). – *Чăваш халăх пултарулăхĕ. Чĕлхе сăмахĕсем. Вĕрӳ-суру чĕлхи. Пĕрремĕш кĕнеке*/ Ăслăлăх редакторĕ *В.Г. Родионов*. Пухса хатĕрлекенĕ, ум сăмахĕпе ăнлантарусене çыраканĕ *В.А. Ендеров*. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2014. – 383 с.

*Чăваш халăх сăмахлăхĕ...* (1987). – *Чăваш халăх сăмахлăхĕ. VI т. II пайĕ. Мифсемпе халапсем*. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 1987. –448 с.